ХЫПАР

Чăваш ачисен хаҫачĕ

# Тантăш

6+

27 (4441) №, 2015, июль /утă/, 2
(1931 ҫулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

КАНУ

## Аякри тăвансене пуҫтарчĕ «Эткер»



**Ҫак кунсенче пирĕн республикăри «Кĕрен парăс» кану ҫуртĕнче тĕрлĕ регионта пурăнакан чăваш ачисене ҫулсерен пуҫтаракан «Эткер» лагерь уҫăлчĕ. Чăваш чĕлхипе литератури олимпиадисенче, юрă-ташă, ăс-хакăлпа литература пултарулăх ăмăртăвĕсенче ҫĕнтерnĕ тата палăрнă Пушкăртстанпа Тутарстанра, Ĕренпур, Чĕмпĕр, Тюмень, Сарă Ту, Пенза облаҫĕсенче, Мускаврa тата Чăваш Енре пурăнакан 35 маттур шкул ачи кунта килме тивĕҫлĕ пулчĕ.**

Тĕрлĕ енлĕ пултаруллă ачасене паллă пулăмпа саламлама килнĕ хăнасем хĕрачасемпе арҫын ачасене тĕрлĕ ăмăртупа вăй-хал вăййисенче маттур та сатур пулма, пĕр-пĕрне пулăшма, чăвашла илемлĕ калаҫма вĕренме, вăхăта усăллă ирттерме, сывлăха ҫирĕплетме ырă сунчĕҫ. Пушă вăхăтра вулама тата тавракурăма ӳстерме К.В. Ивановăн «Нарспи» поэмине, Ф.В. Искендеровăн, И.Ф. Искендеровăн, Е.Ф. Костинăн «Азбука чувашских орнаментов и эмблем» кĕнекине, «Тантăш», «Чăваш тĕнчи» хаҫатсемпе «Самант» журнал пурне те парнелерĕҫ. Хăнасем, лагерь ачисене тупа сăмахĕсене калană хыҫҫăн Чăваш Ен тата Раҫҫей символĕсене ӳкернĕ галстуксене ҫыхса ячĕҫ, мĕн смена вĕҫлениччен вĕсем «Туслăх» ушкăн хастарĕсем пулнине пĕлтерсе саламларĕҫ.

Чăнах та, «Туслăх» ушкăна чи маттур та мал ĕмĕтлĕ ачасем пуҫтарăннине вĕсен пултарулăхне курсан туйса илетĕн. Раҫҫейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен килнĕскерсем, хăйсен енчи тата тăрăхĕнчи чăваш юрри-ташшипе, Константин Ивановăн «Нарспи» Петĕр Хусанкайăн «Таня» поэма сыпăкĕсене вуланипе, шăхлич ăста каланипе, такмаксем шăрантарнипе куракансене савăнтарчĕҫ.

«Эткер» лагерьте ачасем утă уйăхĕн 9-мĕшĕччен канаҫҫĕ. Лагерь ертӳҫи И.А. Диарова тата А.М. Степанов, Л.В. Кудрявцева воспитатель ĕҫтешсем вĕсен канăвне усăллă ирттерме интереслĕ те кăсăк программа хатĕрленĕ. Аякран килнĕ чăваш ачисем Шупашкар хулин историллĕ вырăнĕсемпе музейĕсене, Атăл ГЭСĕн музейне, Андриян Григорьевич Николаев космонавт ҫуралса ӳснĕ Шуршăл ялне ҫитĕҫ, Муркаш районĕнe паллашĕҫ. Чăваш Республикинчи чи вата юмана пуҫ тайĕҫ. Паллă поэтсемпе, писательсемпе тата ӳнер ăстисемпе тĕл пулма та палăртнă. Ăсталăх урокĕсенче сăвă-калав ҫырма, тĕрĕ тĕрлеме тата ҫĕнĕ ташă-юрă вĕренĕҫ, кашни кун чăваш чĕлхине вăйă урлă ăса хывĕҫ.

*Геронтий НИКИФОРОВ,*
*ЧР тава тивĕҫлĕ вĕрентекенĕ,*
*Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн тата вĕренӳпе ăслăлăх комитечĕн пайташĕ.*

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** «Аякран-аякран килсе ҫитрĕмĕр «Кĕрен парăса»!

---

2016 ҪУЛХИ ПĔТĔМ РАҪҪЕЙРИ ЯЛХУҪАЛĂХ ҪЫРАВĔ

Пурне те! Пурне те! Пурне те!

### «Ялхуҫалăх ҫыравĕ ҫинчен эсир мĕн пĕлетĕр?»

**викторина**

«Ялхуҫалăх ҫыравĕ ҫинчен эсир мĕн пĕлетĕр?» викторинăна патшалăх статистикин Федераллă службин Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри Территори органĕпе республикăри ачасемпе ҫамрăксен «Тантăш» хаҫат редакцийĕ йĕркелеҫҫĕ. Ăна 2016 ҫулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуҫласа ҫурла уйăхĕн 15-мĕшĕччен иртекен Пĕтĕм Раҫҫейри ялхуҫалăх ҫыравне халалланă. Ҫак ĕҫĕн пĕлтерĕшĕ ҫав тери пысăк. Ялхуҫалăхне аталантарас тесен аграри умĕнче тăракан ҫивĕч ыйтусене тĕплĕн тишкермелле, тĕрĕс информацийе усă курмалла. Ҫырав – ялти ҫĕнĕ улшăнусене пуҫламалли тĕп тапхăрсенчен пĕри. Вăл умри ҫул-йĕре палăртма, вăйсене, майсене виҫме, хаклама май парĕ.

Тĕнчери чылай ҫĕршывра ялхуҫалăх ҫыравĕсем ҫирĕп йăлапа пулса пыраҫҫĕ. 2016 ҫулхи Пĕтĕм Раҫҫейри ялхуҫалăх ҫыравне Раҫҫей Федерацийĕн саккунĕпе килĕшӳллĕн ирттересҫĕ.

Хуравсене **юпа уйăхĕн 31-мĕшĕччен** «Тантăш» хаҫат редакцине ҫак адреспа: **Чебоксары, проспект И.Яковлева, 13** ярса памалла. Ҫавăн пекех хуравсене редакцин электрон адресĕпе те йышăнатпăр. Ҫĕнтерӳҫĕсене Пĕтĕм Раҫҫейри ялхуҫалăх ҫыравĕн асăнмалăх парнисемпе чыслатпăр.

**Ыйтусем**

1. Раҫҫей Федерацийĕн «Пĕтĕм Раҫҫейри ялхуҫалăх ҫыравĕ ҫинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн ялхуҫалăх ҫыравĕсем миҫе ҫултан пулса пыраҫҫĕ?
2. Пирĕн ҫĕршыв историйĕнче пирвайхи хут ҫырав хăçан пулнă?
3. Пĕтĕм Раҫҫейри ялхуҫалăх ҫыравне юлашки хут хăçан ирттернĕ?
4. 2016 ҫулхи Пĕтĕм Раҫҫейри ҫырав эмблеми ҫине мĕн ӳкернĕ? Вăл мĕне пĕлтерет?
5. Ҫырав вăхăтĕнче переписчиксене документ кăтартмалла-и?
6. Ялта пурăнакан уйрăм хуҫалăх тытакан ҫыннăн ҫырава обязательнăй йĕркепе е хăй ирĕкĕпе хутшăнмалла?
7. Пĕтĕм Раҫҫейри ялхуҫалăх ҫыравĕн тĕллевĕсем мĕнле?
8. Ҫыравра мĕнле объектсене шута илеҫҫĕ?

«ЗАРНИЦА», «ОРЛЕНОК» ÇАРПА СПОРТ ВĂЙĂЙИСЕН РЕСПУБЛИКА ФИНАЛĔ

# Иртрĕ хĕрӳ вăйă, çуталчĕ питре кулă



**Кăçал çамрăк çарçăсен республика финалĕ июнĕн 25-29-мĕшĕсенче Патăрьел районĕнчи Шăнкăртам ял тăрăхĕн уçланкинче иртнĕ. Çак ăмăрту вăл – пĕр вăхăтрах вăйă та, пĕлӳ те, пиçĕхлĕхе тĕрĕслекен кĕрешӳ те. Çитмĕл ытла ушкăн тупăшнă унта: пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем, кадет класĕсем, çарпа патриот клубĕсем, професси пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ учрежденийĕсем.**




Пилĕк кун хушшинче ачасем тĕрлĕ конкурс витĕр тухнă: туризм, ишев, алă вĕççĕн кĕрешесси, чăрмавсене çĕнтересси, стройпа утасси.

Уяв вĕçленнĕ çĕре Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев та пырса çитнĕ. Çавăн пекех Раççей Федерацин Канашĕн членĕ Вадим Николаев, ЧР вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов, ЧР çар комиссарĕ Александр Мокрушин полковник, Патăрьел район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Глухов та çамрăксен умĕнче сăмах каланă, малашнехи пурнăçра ырлăх-сывлăх, çитĕнӳсем суннă.

Пилĕк кунри хĕрӳ тупăшура чи пултаруллисем çак ушкăнсем пулса тăнă: «Зарницăра» – Патăрьел районĕнчи 1-мĕш вăтам шкул, «Орленокра» – Çĕрпӳри вăтам шкул. Хастар кадетсенчен Шăмăршăри вăтам шкул вĕренекенĕсене çитекен пулман. Çарпа патриот клубĕсен ушкăнĕнче Муркашсем, професси пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ учрежденийĕсен хушшинче Патăрьелĕнчи агротехникум – пĕрремĕшсем. Мала тухнă пур ушкăн та кубока тивĕçнĕ. Команда членĕсене медальсемпе хавхалантарнă.

Тата çакна палăртма кăмăллă. Патăрьелсен виççĕмĕш ушкăнĕн, Патăрьелĕнчи 2-мĕш шкулăн, кăтартăвĕсем те япăх мар. Вĕсем «Орленокра» 7-мĕш вырăна тивĕçнĕ.

Патăрьелĕнчи 1-мĕш шкул вара /ертӳçи – физкультура учителĕ Юрий Васюткин/ Атăлçи Федераллă округра иртекен «Зарницăра» тупăшса Чăваш Ен чысне хӳтĕлĕ.

2013 çулта Патăрьелĕнчи 2-мĕш шкул çак ăмăртура республика ятне çӳлте тытнăччĕ. Вĕсем хĕрӳ тупăшура 4-мĕш вырăна тухнăччĕ. Мĕнех, апла пулсан кăçал та Патăрьелсене ăнăçу сунар.

***Элиза ВАЛАНС.***

# Çамрăк ентешĕмĕрĕн пурнăçне тăшман пульли татнă

Кăçал, Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа 70 çул çитрĕ. Ытла та йывăр килнĕ вăл. Миçе пин çынна асап кӳмен-ши, выçăпа нушалантарман-ши, миçе çемьене, ачана тăлăха тăратса хăварман-ши, миçе пин çамрăка вăхăтсăр çĕре кĕртмен-ши хăрушă вăрçă? Анчах мирлĕ пурнăçра та пирĕнтен çамрăклах уйрălса каякансем чылай. Афганистан, Чечня... Ку сăмахсене илтсен чĕре ыратса каять, пырта тем капланса килет, куççуль тухать.

менĕнче иртрĕ. Чечен вăрçин паттăрне чыслама Шупашкартан, район администрацийĕнчен, Калининоран, Туçи Çармăсран, районти техникумран килнĕ хăнасемпе кадет класĕсем, Афганистанпа Чечен вăрçин ветеранĕсем, ял çыннисем, шкул ачисемпе вĕрентекенсем пуçтарăнчĕç. Çавăн пекех хăйĕн ывăлне тата юратнă шăллĕне асăнма Владимир Анатольевичăн ашшĕпе пиччĕшĕ те килчĕç.

Тухса калаçакансем хушшинче Вăрнар



Хĕлле эпир Чечен Республикинче паттăррăн çапăçса пуç хунă ентешĕмĕр, Владимир Анатольевич Антонов ячĕпе, асăну кунне ирттертĕмĕр.

Вăл Вăрнар районĕнчи Хурăнсур Çармăсра 1976 çулта çуралнă. Ачалăхĕ çак ялтах иртнĕ, шкула кӳршĕри Çĕрпеле çӳренĕ. Тăрăшса вĕреннĕ, спортпа туслă пулнă.

1994 çулта Вăрнарти Çар комиссариачĕ чĕннипе каччă çар ретне тăрать. Çӳллĕ те яштака йĕкĕте тӳрех асăрханă, тинĕс çар флотне илсе кайнă. Владимир Анатольевич спортпа питĕ туслă пулнă. Тăван тăрăхра çеç мар, районта та, республикăра та тĕрлĕ ăмăртăва хутшăнса малти вырăнсене йышăннă. Сехечĕ-сехечĕпе вăлтапа кӳлĕ хĕрринче ларнă, çутçанталăкпа киленме юратнă, тус-тантăшĕсемшĕн çывăх юлташ пулнă, ытти ача пекех вăрçăлла выляма кăмăлланă. Асăну кунĕнче те çывăх тусĕсемпе тăванĕсем Владимир Анатольевич лăпкă та лайăх юлташ пулнине аса илчĕç.

1995 çулхи январь уйăхĕнче Владимир Антонов тăракан полк Çурçĕр Кавказа çитсе чарăнать. Вăл ун чухне çыхăну ушкăнĕн водителĕ тата электрикĕ шутланнă. Январĕн 30-мĕшĕнче машинăсен колонни, унта Владимир Анатольевич та пулнă, Çурçĕр Осетинчен Грозный хулине çул тытнă. Самашкинчи ялĕ çывăхĕнче темиçе машина тăшмансен засадине лекнĕ... Çак тан мар çапăçуран пĕр салтак та чĕрĕ тухайман. Тăшман пульли пирĕн ентешĕмĕрĕн пурнăçне те татнă... Владимир Анатольевич Антонова хăй çуралса ӳснĕ ялĕнче, Вăрнар районĕнчи Хурăнсурта пытарнă. Вилнĕ хыççăн ăна Паттăрлăх орденĕпе чысланă. Ял çыннисем, тус-юлташĕсем, тăван-хурăнташĕсем, вĕрентекенсемпе вĕренекенсем унăн сăнарне яланах асра тытаççĕ. Владимир Антонов ячĕпе шкулта стенд, Асăну хăми уçнă. Çывăх вăхăтрах кадетсен ушкăнне те йĕркелеме палăртнă.

Асăну кунĕ Çĕрпелти культура кермен район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Н.П.Петров, çамрăк пограничниксен ушкăнне ертсе пыракан штаб начальникĕ Ю.А. Никифоров, районти «Боевое братство» ушкăн ертӳçи О.Л.Никитин, Афганистан вăрçин ветеранĕсен Совечĕн ертӳçи С.Г.Ефимов, Афган вăрçин ветеранĕ Л.В.Иванов, Калининори тата Çĕрпелти шкул директорĕсем Т.П.Ефимовăпа И.А.Миронова пулчĕç. Вĕсен сăмахĕсем, ырă сĕнĕвĕсем, чĕнсе каланисем кашнийĕн чĕринчех ырă туйăмсем вăратрĕç. Владимир Антоновăн ашшĕ каланă сăмахсене вара никам та пăлханмасăр, куççульленмесĕр итлеме пултараймарĕ. «Чечен вăрçи юратнă ывăлăма ĕмĕрлĕхех тĕп туни чуна ыраттарать... Сирĕн нихăçан та çакăн пек çухату курмалла ан пултăрччĕ... Манăн ывăлăма асра тытнăшăн тав тăватăп...», – терĕ вăл хăй те пăчăртанса тухакан куççульне чараймасăр. Паттăр ывăл ӳкерчĕкĕнчи пек ăна пурте тав сăмахĕ каларĕç, ырă сăнарне яланах асра тытма сăмах пачĕç.

Асăну кунне халалланă концертра Çĕрпелти шкулта вĕренекенсен сăвви-юрри культура керменĕнчи халăха тыткăнларĕ, чылайăшĕ куççульне шăла-шăла сасăсăр макăрчĕ. Владимир Антонова асăнса хатĕрленĕ презентаци те пурин чун-чĕрине те хускатрĕ: унăн ачалăхри, шкулта вĕреннĕ вăхăтри, çамрăклăх çулĕсенчи, салтак тумне тăхăннă сăнӳкерчĕксем пĕрин хыççăн тепри черетленсе пычĕç. Пурин чунне те пăлхатрĕç вĕсем.

Асăну кунне пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнă паттăрсене пĕр минут шăп тăрса чысларăмăр. Юлашкинчен Владимир Анатольевич Антонов вил тăприйĕ çине, Асăну хăми умне чĕрĕ чечексем хутăмăр. Ентешĕмĕрĕн ырă сăнарĕ яланах чĕрере упранĕ.

***Анастасия ФЕОФАНОВА.***
Вăрнар районĕ,
Çĕрпел.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çуртĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
**54802** - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
**11466** - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çуртĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1106 экз.

● ЗАКАЗ
№ 2505
Пичете июль уйăхĕн 1-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

Вениамин ТИМАКОВ

# Сăмах илемне туйсан...

## (сăвă çырма вĕренекенсене пулăшма)

*(Малалли.*
*Пуçламăшĕ 25-26-мĕш номерсенче).*

Паллă поэтсенчен кашниех халăхăн сăмах вĕççĕн упранакан пуянлăхне чĕререн юратнă, вĕсене ырмиканми тĕпченĕ. Сăмахран, вырăссен аслă поэчĕ А.С. Пушкин юрăсемпе юмахсем хапăлласа итленĕ. Ача чухнех ăша хывнă халăх сăмахлăхĕ ăна чаплă произведенисем çырма чылай пулăшнă. А.С. Пушкинăн ятарласа çырнă юмахĕсенче кăна мар, ытти произведенийĕсенче те /тĕслĕхрен, «Евгений Онегин» сăвăлла романра/ вырăс халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем самаях паллă йĕр хăварнă. «Вырăс чĕлхин уйрăмлăхĕсене тĕплĕн пĕлмешкĕн ĕлĕкхи юрăсене, юмахсене тата ыттине те вĕренмелле», – тенĕ Пушкин. К.Иванов, Н.Шелепи, Ç.Элкер, В.Митта, П.Хусанкай чăваш халăх поэзине яланах чĕререн юратнă, кирлĕ чухне вĕсемпе усă курнă.

Чăваш халăхĕн те, ытти халăхсенни пекех, юрăсем çав тери нумай. Вуншар пин сăвă-юрă упранать халăхăн чун-чĕринче. Вĕсене паянхи кун та пухса çитереймен-ха. Ку вĕçĕхĕррисĕр пуянлăх пирĕн паянхи поэтсене те чĕрĕ сăнар, çĕнĕ кĕвĕ парать.

Акă илсе пăхар-ха чăвашсен çăварни юрринчи пĕр çаврăма. Сăнаса пăхар унти кĕвĕпе сăнлăха:

Турта тулли тур лаши,
Турти тăрăх тар юхать,
Тупань тăрăх шыв юхать,
Çăварни иртет, кун юлать.

Тимлĕ вулакан, сăмахсен кĕввине итлесе пыракан çыншăн чи малтанах кунта пĕр пек янăракан сасăсем нумайййи сисĕнет: «турта тулли тур», «турти тăрăх», «тупань тăрăх». Юрă йĕркисенчи «т» сасăпа пулнă аллитераци /хупă сасăсем пĕр пек янăрани/ хăйне евĕр кĕвĕллĕ илтĕнет. Çавăнпа сăмахсем асра ытларах юлаççĕ, вĕсене юрлама та кăмăллă.

Çак асăннă йĕркесенче халăх шухăша тÿрех мар, сăнарсемпе илемлетсе калать. Вăл «мăнтăр, пысăк лаша» вырăнне «турта тулли тур лаша» тенĕ. Çынсем нумай ларнипе лаша тарланине «турти тăрăх тар юхать» тесе палăртнă. Çăварнире çул çине час-часах шыв та тухать. «Çул шывлă» текен шухăша «тупань тăрăх шыв юхать» тесе илемлетсе каланă.

Вăйăсенче юрлакан сăвăсен пĕр тĕслĕхне илсе пăхар:

Пухăнтăмăр, хĕр-тантăш,
Ирхи сĕтĕн хăйми пек.
Салантăмăр, хĕр-тантăш,
Вĕçен кайăк чĕппи пек.

Кунта пĕтĕмпех сăнарлă. Хĕрсем вăййа хăйма пухнă пек пухăнаççĕ иккен. Çапла поэт чунлă çын анчах калама пултарнă. Эпир сахал сăмахсем тăрăххах çакна туятпăр: хĕрсем ытларах шурă тăхăннă, вĕсем вăййа майĕпен, пур енчен те пуçтарăнаççĕ. Çаксене пĕтĕмпех «хăйма пек» текен танлаштару каласа парать. Вăйă саланнă чухне ĕç хăвăртрах пулса иртет: «кайăк чĕппи пек» васкаççĕ пухăннисем.

Сăвăлла произведенисен формисемпе тытăмĕсем ытларах халăх поэзийĕнчен тухнă. Поэтсем мĕн авалтанах халăх юрри-сăввисен тытăмне, кĕввине тĕрлĕ енлĕн тĕпчесе вĕреннĕ.

Эпир час-часах сонет, рондо, газель, вирелэ, серенада, хокку тата ытти формăсене асăнатпăр. /Вĕсем пирки «Лирика жанрĕн формисем» тата «Кĕске сăвăсем» сыпăксенче каланă. Ку формăсен никĕсĕ пурин те халăх поэзийĕнче.

Çапла вара, поэзи «йывăçĕ» халăх пурнăçĕнчен, унăн пултарулăхĕнчен вăй, сĕткен илсе аталаннă. Вăл пиншер поэта хăват парса тăрать.

**(Малалли пулать).**

## «Сăвă-калав çыракан пурнăç çине ăшшăн, ыррăн пăхать...»



Хăш-пĕр шкулсенче чăваш чĕлхи предметне хисепе хуманни палăрать. Шел пулин те, пурах çав ун пеккисем. Анчах Çĕрпÿ районĕнчи Опытнăй шкулĕнче мар. Кунта чăваш чĕлхипе литературине тата тăван ен культурине вĕрентекен Татьяна Николаевна Петрова предметăн пысăк пĕлтерĕшне тата хăй мĕн тери ăста учитель пулнине Раççей шайĕнче кăтартса панă, Гранд çĕнсе илнĕ.

– Ĕçленĕ тапхăрта нумай ачана вĕрентсе кăларма тиврĕ, класс ертÿçи пулса та ултă класс кăларса янă эпĕ, – тет 32-мĕш çул ĕнтĕ çак тивĕçе пурнăçлакан Татьяна Николаевна. – Манăн шухăшпа, учителĕн урокпа кăна çырлахса лармалла мар, урок хыççăн класс тулашĕнчи ĕçсене те йĕркелемелле.

Татьяна Николаевна икĕ кружок ертсе пырать: «Радиокорреспондент» тата «Çамрăк çыравçă». Тĕллевĕсем пĕр пекех: чăвашла сăвă-калав çырасси, Чăваш Ен наци радиовĕпе вуласа парасси. Ку ĕçе пурнăçлама «Республика сасси» передача пулăшать иккен.

Паллă ĕнтĕ, ачан пултарулăхне асăрхасан, ăна хавхалантарсан унăн çав туртăм тата вăйланать. Татьяна Николаевна патне кружока çÿрекенсен те чăвашлăх туйăмĕ ÿсет. Вĕсен тăван халăх, унăн культурипе историйĕ çинчен нумайрах пĕлес килет. Ахальтен мар-çке алла аттестат илнĕ хыççăн чылайăшĕ аслă шкулсенчи чăваш уйрăмне вĕренме кĕрет. Руслан Орешкин, Ирма Башмакова хăй вăхăтĕнче «Тантăш» хаçатăн чи хастар авторĕсен шутĕнче пулнă, пурнăç çулне те журналистикăпа çыхăнтарнă. Чăваш чĕлхи вĕрентекенĕн ĕçне суйласа илекенсем те сахал мар. Вĕсем юратнă вĕрентекенĕпе яланах çыхăну тытаççĕ, канашлаççĕ.

– Кружок ĕçĕ, ман шутпа, питĕ кирлĕ, – тет Татьяна Николаевна. – Çак вĕренÿ çулĕнче тăваттăмĕш классемпе тăрăшса ĕçлерĕмĕр. Диана Ивановăпа Таня Яковлева сăвă çыраççĕ, Маша Яковлева вара калавсемпе кăсăкланать. Вунпĕрмĕш класа çитиччен вĕсен пултарулăхне аталантарма тăрăшасчĕ. Кайран килĕшекен ĕçе суйласа илме çăмăлрах пулĕ. Мĕншĕн тесен 10-11-мĕш классенче кăна ĕçлени çителĕксĕр, чылай маларах пуçласан тухăçлăхĕ пысăкрах.

Кружок валли пултарулă вĕрентекен модульлĕ программа хатĕрленĕ. Кашнинчех тĕрлĕ тема, анчах ытларахăшĕ çырассипе çыхăннă. Ачасем кунта сăвă виçисем, жанрсем çинчен тĕплĕнрех вĕренеççĕ. Çавăн пекех чăваш халăх поэчĕсен пултарулăхĕпе те паллашаççĕ, вĕсен сăввисене тишкереççĕ. «Тантăшра» пичетленекен сăвăсем те Опытнăй хастарĕсен «тĕрĕслевĕ» витĕр тухаççĕ иккен. Тантăшĕсен хайлавĕсене вуланă хыççăн ачасен çырас туртăмĕ тата пысăкланать.

– Паллах, ачасене çавăн пек интереслентерсен, çак ĕçе кĕртсе ярсан вĕсем ĕçлеме хирĕç мар, – палăртать хăйĕн шухăшне Татьяна Николаевна. – Сăвă çырма талант кирлĕ тетпĕр. Çав вăхăтрах вĕрентекенĕн те, аслисен те тин кăна алла калем тытакансене пулăшса пымалла, хавхалантармалла. Ача пĕр сăвă çырать те вĕрентекен ăна: «Санран пиçмест, пулмасть», – тесен унăн кăмăлĕ пĕтет, паллах. Сăвви чаплах пулмасан та унтан-кунтан тÿрлетсен тепрехинче вăл лайăхрах çырма пуçлĕ. Çавăнтанах хăнăхса пыраççĕ.

Кружока çÿрекен пултарулă ачасенчен пĕри, Виолетта Анифёрова, вунпĕрмĕш класран вĕренсе тухрĕ те ĕнтĕ. Сăвă çырма пит ăста вăл. Республика шайĕнчи ăмăртусенче тăтăшах çĕнтерет. Хайлавĕсенче тĕрлĕрен тема хускатса кашнинчех вулакан чунне вăратма пултарать.

Вуннăмĕш класран вĕренсе тухнă Катя Николаева – пур енлĕ талантлă хĕрача. Вăл спортпа та туслă, ташлама та юратать. Çавăн пекех пушă вăхăтра сăвă та çырать. Сăмахран, вăл амăшĕ çинчен хайланă сăвви вĕрентекенне питĕ килĕшнĕ, тарăн шухăша янă.

Шкулта литература тĕлпулăвĕсем час-часах иртеççĕ. Кунта Валери Туркай та, Раиса Сарпи те, Альбина Юрату та килсе кайнă. «Хыпар» хаçатри Валентин Григорьев вара çамрăк талантсемпе ăсталăх урокĕ ирттернĕ. Çак тĕлпулусем, паллах, ачасен асĕнче яланлăха ырă йĕр хăвараççĕ, пултарулăха ÿстерме хавхалантараççĕ.

– Тăван чĕлхене пĕлни, чăвашлăха юратни, сăвă çырни пире малалла аталантарать, – тет Татьяна Николаевна. – Чăвашсем – пуян халăх. Пирĕн сăвăçсемпе çыравçăсем, журналистсем нумай, чаплă çынсем татах та пулĕç. Сăвă-калав çыракан пурнăç çине ăшшăн, ыррăн пăхать. Çавăнпа ачасен ĕмĕчĕсене татмалла мар. Пурин те «Тантăшпа» туслашмалла. Унта кашни вулакан хăйне кирлине илме пултарать. Аслисем ачисем е мăнукĕсем çырнине курса хĕпĕртеççĕ.

## Çĕнĕ хунавсем



Ачашăн хавхалантару та мĕн тери хаклă пулнине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Кружокра пултарулăхне туптакан Маша Яковлевăшăн, Диана Ивановăшăн тата Таня Яковлевăшăн та вăл пысăк вырăн йышăнать.

– Эпĕ радиопа сăвăсем итлеме юрататăп. Ачасем валли интереслĕ кăларăмсем нумай унта, – тет Диана хăйĕн кăсăкланăвĕсене уçса панă май.

Кукамăшĕ яланах ăшă сăмахпа çунатлантарнă ăна, анчах, шел те, чире пула пурнăçран уйрăлнă. Çавăнпа Диана ÿссе çитсен ун пекех тухтăр пулма, пурне те сыватма пултаракан эмел шухăшласа кăларма ĕмĕтленет.

Питĕ харсăр хĕрача вăл, нимрен те хăрамасть. Тус-тантăшĕсем унран тĕлĕнеççĕ те. Диана – çутçанталăк тусĕ. Йывăççене сăнама питĕ кăмăллать, вĕсем çинчен сăвă та çырать.

– Йывăç пулмасан çĕр пушанса юлĕччĕ, кунта пачах та пурнăç пулмĕччĕ, – тет Диана.

Таня вара вĕрентекен ĕçне алла илесшĕн. Татьяна Николаевнăн кашни урокне хавасла çÿрекенскер, пĕр сăмахне сиктермесĕр итлекенскер унран тĕслĕх илет ĕнтĕ. Йăмăкĕ Аня хальлĕхе садике анчах çÿретха, çапах Таня ăна пĕрре те канăç памасть.

– Йăмăкăм «а» саспаллине кăна паллать. Эпĕ ăна пурпĕрех вулама та, сăвă çырма та вĕрентĕп-ха, – тет вăл кăмăллăн.

Таньăна Раиса Сарпи тата Корней Чуковский пултарулăхĕ хавхалантарать. Вĕсен хайлавĕсене вуласан хĕрачан çырас туртăмĕ пысăкланать.

Маша вара кĕнекепе туслă. Кулăшла калавсем, юмахсем ăна питĕ илĕртеççĕ. Сăвă вулама та юратать.

– Сăвăсем астăвăма лайăх аталантараççĕ. Кайран çакă институтра та кирлĕ пулĕ. Манăн çитĕнÿсемшĕн анне те питĕ савăнать, – тет Маша.

Сăмах май, амăшне савăнтарма вăл темĕн те шухăшласа кăларать. Шкултан таврăнсанах унăн ĕçĕсене çăмăллатма тăрăшать, ÿссе çитсен вара тата пысăкрах пулăшу кÿме ĕмĕтленет.

Маша хăйĕн калавĕсенче çĕнчусемпе чĕрчунсем çинчен çырма кăмăллать, шухăшне ытарлăн пĕлтерет.

Маттур та пултарулă вĕренекенсем «Тантăш» тусĕсене пур çĕрте те ăнăçу сунаççĕ:

– Ăслă пулăр! Сăвă-калав çырăр! Çак ĕç сире килĕшет пулсан нихăçан та ан чарăнăр.

*Лариса ПЕТРОВА.*

# Уяв хаваслă кăмăл парнелерĕ



Çĕнĕ Лапсар салинчи «Акаци» клубра ташă ăсталăхне туптакансен концерчĕ те куракансене тыткăнларĕ. «Факел», «Укăлча», «Луконэ» эстрада халăх ансамблĕсем пултарулăхĕпе палăрчĕç. Илемлĕ костюмлă «Каприз» ачасен ташă ушкăнĕ хаваслă инди ташшипе савăнтарчĕ. «Салам» вокал ансамблĕ вара тăван чĕлхепе янăракан юрăсене чунтан шăрантарчĕ.

ЧР культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Борис Ахтимиров, Наталья Рова, Галина Аникеева, Наталья Михайлова юрăçсем «Чун парнелет», «Шупашкар», «Айтăр юрлар-и?» тата ытти чăваш юррисемпе уява пуянлатрĕç.

Кÿршĕ регионсенчен килнĕ хăнасем те, артистсем те праçникпе кăмăллă юлчĕç. «Чăваш Ене тăтăшах килсе çÿретпĕр. Чăваш халăхĕ хăйĕн ырă кăмăлĕпе, тараватлăхĕпе чуна тыткăнлать. Çавăнпа кунта тăтăшах пулма тăрăшатăп», – терĕ «Раççей çăлкуçĕсем» халăх пултарулăхĕн фестивальне хутшăннă Мордва Республикин ушкăнĕн ертÿçи Валерий Карпов.

Кашни хăна, ушкăн, ансамбль Шупашкарти кăна мар, ытти районта та иртнĕ Республика Кунĕпе кăмăллă юлчĕç.

*Нина ГРЕЧКО.*

**Сăнÿкерчĕкре:** уяв саманчĕсем.



**Республика Кунне Чăваш Ен анлă паллă турĕ. Шупашкарта та, ытти районсенче чылай мероприяти иртрĕ. Çĕнĕ Лапсар салинче те пысăк, хаваслă уяв пулчĕ. Тĕрлĕ регион хăнисемпе артисчĕсем пухăнчĕç унта. Мари Эл, Мордва, Тутарстан республикисенчен килнĕ юрă-ташă ансамблĕсем чăвашсене хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç.**

# Савăнтăмăр Акатуйра



**Çĕрĕçченĕ «Акатуйра» савăнчĕ. Шупашкар районĕнчи Станьял тăрăхĕнче те кĕрлерĕ хаваслă праçник. Ял çыннисем ăна валли ятарласа лаптăк хатĕрлерĕç: карта тытрĕç, пĕчĕк «пÿртсем», сцена ăсталарĕç.**

Кашни ял кăмăлтан хатĕрленчĕ уява. Çав кун ирхинех тутлă апат-çимĕç янталарĕç, хăнасене кĕрекене вырнаçтарма урама сĕтел-пукан ăсталаса лартрĕç. Спорт лаптăкĕсем те хатĕрччĕ уяв валли.

Темиçе районтан, ялсенчен хăнасем йышлăн пухăнчĕç Акатуя. Уяв Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев саламланинчен пуçланчĕ.

Ĕçре уйрăмах палăрнă ял çыннисене, фермăра, агропромышленность комплексĕнче тăрăшакансене, учительсене, «Паха тĕрĕ» фабрика ĕçченĕсене тăрăшса вăй хунăшăн Хисеп грамотипе, дипломпа, кубокпа, парнепе наградăларĕç.

Чи лайăх ял поселенийĕсене те палăртрĕç. Шупашкаркасси – 1-мĕш, Кипечкасси – 2-мĕш, Кайри Ункăпуç 3-мĕш вырăнсене тивĕçрĕç.

Пухăннисене Чăваш Ен парашютисчĕсем хăйсен маттурлăхĕпе савăнтарчĕç. Вĕсем самолетран уçлăха республика, Раççей ялавĕсене çĕклесе сикрĕç. Çĕр çинче парашютистсене тăвăллăн алă çупса кĕтсе илчĕç.

Муркаш, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне тата ытти районтан килнĕ фольклор ансамблĕсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç. Тăван чĕлхепе янăракан юрăсем кашнин кăмăлнех çĕклерĕç ахăртнех. Чăваш халăх артисчĕ Иван Христофоров юррисем чуна пырса тиврĕç.

Хаваслă юрă-ташă уява илемлĕхпе, савăнăçпа тултарчĕ. Чăн-чăн пăхаттирсем вара спорт ăмăртăвĕсенче хăйсене тĕрĕслерĕç. Волейболла, футболла выляса, кĕрешсе тупăшрĕç. Малтисен йышне, тĕлĕнмелле те, ветерансем йышăнчĕç.

Унсăр пуçне йывăçран каскаласа, тимĕртен туптаса ăсталанă ĕç хатĕрĕсен, сăнÿкерчĕксен тата ытти япаласен куравĕсене йĕркеленĕччĕ. Уйрăмах Кÿкеç салинчи 1-мĕш шкулта вĕрентекен Николай Андреевич Востриковăн куравĕ пурне те тыткăнларĕ. Тимĕртен тĕрлĕ япала туптаса хатĕрлеме питĕ ăста вăл. Çамрăк ăрăва та хăй пĕлнине вĕрентет, ĕçĕсене вара Раççей шайĕнче иртекен конкурссене те тăратнă. Малти вырăнсене тăтăшах йышăнаççĕ вĕсем.

Уявран пурте тулли те савăнăçлă кăмăлпа саланчĕç.

*Иосиф ЕМЕЛЬЯНОВ.*

Шупашкар районĕ,
Хыркасси.



*Алесь АДАМОВИЧ,*
*Даниил ГРАНИН*

**(Малалли. Пуçламăшĕ 26-мĕш номерте. «Блокада кĕнеки» ярăмран).**

## «...Темшĕн пуçĕнчи шлепкине хыврĕ»

Тепĕр кунне алăка такам шаккарĕ. Çăкăр илме каймарăм та, килтехчĕ эпĕ. Кам килме пултарчĕ-ши тесе алăк патнелле ыткăнтăм.

– Кунта Лидия Георгиевна Охапкина пурăнать-и? – ыйтрĕ палламан арçын тул енчен.

Хайхискере шалалла иртме сĕнтĕм. Фронтри упăшка янă иккен ăна ман пата. Посылкăпа çыру сĕтел çине кăларса хурсан, куçăмсенчен савăнăç куççулĕ юхса анчĕ. Конверта хăпăл-хапăл алла илтĕм, унтан хут листине туртса кăлартăм. Мăшăрăм шăрçаланă йĕркесене вулама пикентĕм. «Юратнă Лида...» Çакна вуласанах антăхса макăрма тытăнтăм. «Ах, Вася, эпир мĕнле пурăннине курасчĕ санăн... Йывăр-çке пире, йывăр», – тесе ĕсĕклесе хўхлерĕм. «Сире валли пĕр кило манна кĕрпи, пĕр кило рис тата икĕ пачка печени яратăп», – тесе сасăпах вуларăм. Çакна илтнĕ Толик:

– Анне, аннеçĕм, рис пăтти пĕçерсе парсам... Шĕвĕ мар, çăра пултăр апачĕ. Тархасшăн, – тилмĕрчĕ ывăлăм.

Пире пăхса тăракан лейтенантăн куçĕсем сасартăках шывланчĕç.

– Турăçăм, ним айăпсăр ачасем выçăпа та сивĕпе нушаланаççĕ. Хам мĕн курнине мăшăрăра тĕпĕ-йĕрĕпе каласа парăп. Сире илме килетпĕрех, анчах кăштах кĕтĕр. Ирсĕр фашистсене куççулĕрсемшĕн йăлтах тавăратпăр! Курса тăрăр, эпир нимĕçсене тĕп тăватпăрах! Аякка тарса кайĕç вĕсем, хăравçă мулкачсем! – чĕтренсе тухрĕç лейтенантăн сăмахĕсем.

Пĕр хутчен çеç çăра пăтă пĕçерсе патăм ачасене. Кайран шеллерĕм кĕрпене, шĕвĕ апатсем янтăлама тытăнтăм. Ара, пĕр кунпа çеç пурăнмалла мар-çке. Тем пек перекетлесен те, мĕн пуррине йăлтах çисе ятăмăр. Вутти те пĕтсе çитрĕ. Пўртре сивĕ. Пальтопа, кăçатăпа çўретĕп. Ачасем те хулăн тăхăннă.

Пĕррехинче Роза ачаллă хĕрарăмсене вутă парасси пирки пĕлтерчĕ. Райĕçтăвкома кайрăм, чăнах та ордер çырса пачĕç. Розăпа çуна туртса вутă илме çăва çине кайрăмăр...

Пĕр метрлă пĕренесене пўрте аран сĕтĕрсе кĕтĕмĕр. Ăна татса çуртăмăр та тўрех кăмака хутрăмăр. Чĕрĕ вутта тивертме профессор библиотекинчи кĕнекесене илтĕмĕр. Пўрт ăшăнсан лĕпсĕртетсе çемĕçсе кайрăм. Хам мĕн тери ывăннине туйса илтĕм. Çывăрас килчĕ. Вутă çунса пĕтсен, кăварне пăхмасăрах юшкана хупрăм. Ăшши тухса каясран пăшăрхантăм-çке. Кăшт вăхăт иртсен Нина макăрнипе вăрантăм. Пире пурсăмăра та сĕрĕм тивнĕ иккен. Ура çине сиксе тăтăм, пуç çаврăнса кайрĕ те урайне тĕшĕрĕлсе антăм. Пурпĕрех алăк патне упаленсе çитрĕм те ăна яри уçрăм. Тултан сивĕ сывлăш варкăшса кĕчĕ... Тăнсăр мĕн чухлĕ выртнине калама пултараймастăп. Кайран куçа уçса ятăм, ачасем пирки аса илсен чун ыратса кайрĕ. Пĕтĕм вăя пухса ура çине тăтăм. Нинăна йăтса тĕпеле кайрăм, хыççăн Толик патне ыткăнтăм. Пĕчĕк хĕрĕм аран сывлать, ывăлăма та япăх. Çак кун виççĕмĕр те харăс вилеттĕмĕр вĕт.

Мăшăр парса янă кĕрпесене çисе пĕтертĕмĕр. Каллех выçă пурăнма тытăнтăмăр. Пĕр кунхине ывăлăм ман çине шăтарасла пăхрĕ те сăмах çăмхине сўтме тытăнчĕ.

– Анне, атя тепре пўрте хутса ăшăтар та юшкине унчченхи пек маларах хупар. Сĕрĕмĕ пуçа ыраттарать паллах. Кайран пурте пĕрле çывăрса кайăпăр. Ланлăхах. Мĕн усси выçăлла пурăнни? – терĕ сасартăк.

Ачаран кун пеккине илтме, ай, йывăр пулчĕ...

## Инçе çула пуçтарăнни

Мартăн 4-мĕшĕнче мăшăрăн юлташĕ, пире апатçимĕç илсе килсе панă лейтенант, каллех пирĕн пата çитрĕ. Мана тата ачасене илме. Машинăпа Ладога кўлли урлă каймалла иккен. Анчах вăрăм çула тухма документсем тутармалла. Кайрăм райĕçтăвкомне. Унтисем мана çул çинчи хăрушлăх пирки асăрхаттарчĕç. Тата та интересли: «Сирĕнпе мĕн те пулин пулсан, эпир айăплă мар», – терĕç. Кулса вилмелле. «Енчен те кунта выçăпа вилсен, айăпне хăвăр çине илетĕр-им?» – терĕм. Паллах, ырра шанса аякри тăрăха каятăп. Ара, пурăнас килет-çке. Тепĕр кунне ачасене апатлантартăм, юратса чуптурăм та посылка илме васкарăм. Çуна туртса малтан мăшăрăн пиччĕшĕ патне çитрĕм, ара, чăматанпа кĕрхи пальтона унта хăварнăччĕ вĕт. Каялла тухнă чухне мана кăшт леçме ыйтрăм. Анчах хирĕçлерĕç. Çилленмерĕм. Ара, вĕсем те выçăпа аптăраканскерсем, ытла начарланнă. Утмалăх вăй та çук ахăртнех. Çул çинче лавккаран пĕр татăк çăкăр чĕлли илтĕм, çавăнтах çисе ятăм. Куç умне выçă ачасен сăнарĕсем тухрĕç, куçăм куççульпе тулчĕ. Кирлĕ



документсене тата посылкăна кĕрсе илтĕм. Хавшанăскер килелле утрăм. Аран çитрĕм. Çунана хапха урлă ниепле те каçараймарăм. Мĕн пуррине урама хăварса пўрте чупса кĕтĕм, Розăна чĕнсе илтĕм. Пулăшма ыйтрăм. Манăн сасса илтнипе ачасем макăрса ячĕç. Кĕçех сире тăраниччен апатлантаратăп тесе Розăпа урама тухрăмăр, иккĕн çунана аран сĕтĕрсе кĕтĕмĕр. Пўлĕмре вăй пĕтнине туйса илтĕм. Хывăнтăм та тўрех кравать çине тўнтĕм. Ачасем чуна ыраттармалла макăраççĕ, манăн вара вĕсене пырса ыталама вăй та çук. Кăшт кансан посылкăна уçрăм. Унта сухари, икĕ пачка тулă кĕрпи. Кăмака хутса ятăмăр, пăтă пĕçертĕмĕр. Тĕпренчĕксемпе Розăна тăраниччен апат çитертĕм. Маншăн уяв çитнĕ пекех туйăнчĕ.

Тепĕр кунне, 1942 çулхи мартăн 6-мĕшĕнче, япаласене пуçтартăм та ачасене çавăтса инçе çула тухрăмăр. Кĕçех пĕр хĕрарăм мана шеллесе çунана туртса пыма пулăшрĕ. Вăл та начарскер, аран-аран уткалать. Палăртнă вырăна ўсĕр çынсем пек тайкалана-тайкалана çитрĕмĕр. Машина пире кĕтсе тăрать.

– Тепĕр хут асăрхаттаратпăр, çул çинче çав тери хăрушă. Нимĕçсем пĕр шелсĕр переççĕ. Çавăнпа та тепĕр хут шухăшлама ирĕк паратпăр, – терĕç пире ăсатма пыракансем.

– Каятпăр, каятпăр. Выçса вилес килмест. Хамшăн мар, ачасемшĕн чун ыратать. Çавăнпа та сывă пулăр... Юратнă хулапа та чуна ыраттарса уйрăлатăп, – терĕм эпĕ.

Вуниккĕн, ачасемпе хĕрарăмсем, инçе çула тапрантăмăр. Чи вăйсăрри – эпĕ. Пуç çаврăнать, ыратать. Температура хăпарнине туя пуçларăм. Тахăшĕ эмел ĕçтерчĕ, пуç çине йĕпе алшăлли хучĕç. Вăхăтăн-вăхăтăн тăна çухатрăм. Тăна кĕрсен хам ăçтине ыйтма тытăнтăм. Ачасем пирки пăшăрхантăм.

– Лăплан, лăплан, эпир машинăра. Ачасем те чиперех, – теççĕ мана.

Пĕрремĕш чарăну. Эвакуаци вырăнĕ. Пире ырă кăмăллă çынсем кĕтсе илчĕç. Машинăран анма пулăшрĕç. Вăрăм сарая илсе кĕчĕç. Нумай сак вырнаçтарнă. Варринче виçĕ кăмака. Кĕçех пире валли апат илсе кĕчĕç. Ачасене сĕтпе пĕçернĕ манна пăтти, аслисене яшка çитерчĕç. Эпĕ, вăйсăрскер, умри апата та çиеймерĕм.

Тепĕр кунне малалла тапрантăмăр. Пирĕн Череповец хулине çитмелле. Унта мăшăрăн чаçĕ. Канмалла тесе Ленинград облаçĕнче чарăнтăмăр. Ялсене нимĕçсем çунтарса янă. Пĕр çунса пĕтеймен çуртра çĕр каçрăмăр. Питĕ хытă ўсĕретĕп. Пуç тўсмелле мар ыратать. Пĕр хĕрарăм аспирин пачĕ.

## «Эсир манăн мăшăр мар-и?»

...Мартăн 11-мĕшĕнче Череповец хулине çитрĕмĕр. Çар тумлă мăшăр тўрех машина çине хăпарчĕ. Кашни хĕрарăма, ачана шăтарасла тинкерчĕ. Унтан машинăран каялла сиксе анчĕ. Вăл пире ниепле те палласа илеймерĕ. Пăлханнипе эпĕ ăна чĕнсе ĕлкĕреймерĕм.

– Манăн мăшăрпа ачасем килеймерĕç-им? – ыйтрĕ вăл çынсенчен.

– Килнĕ, килнĕ... Вĕсем машинăрах-çке, – хуравларĕç самантрах.

Каллех машинăна сиксе хăпарчĕ. Пурне те тĕсесе пăхрĕ.

– Эсир мар-и манăн мăшăрăм? – тесе кашни хĕрарăмран ыйтса тухрĕ.

Каллех паллаймарĕ, каллех машинăран сиксе анчĕ. Макăрсах ячĕ. Унтан темшĕн пуçĕнчи шлепкине хыврĕ.

– Лида! Толя! – тесе хыттăн кăшкăрчĕ.

Эпĕ чĕнместĕп. Вăй çук.

– Толя! Толя! Аçу патне килсем! – кăшкăрчĕ чĕтренсе тухакан сассипе.

– Вăл утаймасть... – тесе аран хуравлама пултартăм.

Пире вăл машинăран анма пулăшрĕ. Кашни çемьене пĕр пўлĕме вырнаçтарчĕç.

Упăшкасем сывлăхлă та, тĕреклĕ. Эпир, хĕрарăмсем, хытанка та начарккасем. Эпĕ мăшăрпа калаçаймастăп. Ўслĕк кансĕрлет. Пĕтĕм ўт-пў ыратать. Кил хуçи таçтан сĕт тупса килчĕ, пире хăналарĕ.

– Ыран сире валли каллех сĕт тата кăшт та пулин çĕрулми тупатăпах, – шантарчĕ пирĕн çине шеллесе пăхса.

Унăн сăмахĕсем хăпартлантарчĕç. Çав вăхăтрах ĕненес те килмерĕ. Сĕт, çĕрулми – телей! Таса тум тăхăнас тесе хуралнă кĕпене хыврăм. Мăшăр ман çине куççуль витĕр пăхрĕ те аллисемпе çăварне хупларĕ.

– Шăммăм-шаккăм çеç ĕнтĕ... – терĕм чĕтренсе тухакан сассăмпа.

– Ах, нимĕçсене путлантарсанах пурнăç лайăхланĕ те-ха, – пăшăлтатрĕ мăшăрăм.

Упăшкана 10 кунлăх отпуск пачĕç. Çавăнпа Саратова кайма шут тытрăмăр. Унта аппасемпе анне пурăнать-çке. Пирĕнпе мăшăрăн юлташĕ тата арăмĕпе ывăлĕ те пырас терĕç. Эпир поезда лартăмăр. Унта сивĕ. Ытти пассажирсем те хамăр пекех ытла начар. Выçăпа аптăранă çынсем çул çинчех вилни сехрене хăптарать.

## Пурнăç теме те вĕрентет

Кашни чарăнура пире апатлантарчĕç. Упăшка кастрюль йăтса вокзала чупрĕ. Сывлăхăм кунсерен хавшать. Пĕр чарăнура уçă сывлăшпа сывлас тесе поездран антăм. Мăшăр çак вăхăтра ачасене апатлантарчĕ. Сасартăк поезд пĕр асăрхаттарусăр тапранчĕ. Чыхăна-чыхăна хамăр вагон хыççăн чупрăм, алăк хăлăпĕнчен ярса илтĕм. Поезд хăвăртлăхне ўстерчĕ, манăн урасем çĕре перĕнми пулчĕç.

– Урамра Лида юлать-çке! Пулăшасчĕ! – тесе мăшăрăм хыттăн кăшкăрни хăлхана кĕчĕ.

– Ах, акă ăçта вилме шăпа пўрнĕ мана... Выçăпа та, сивĕпе те мар... Шăп çакăнта... – тесе шухăшларăм.

Тăна çухатрăм. Вася манăн пальто çухавинчен ярса илме ĕлкĕрнĕ. Лейтенантпа пĕрле вагона илсе кĕнĕ. Тăна кĕрсен урара чăлха çуккине, кăçатă çурри касăлнине асăрхарăм. Сылтăм урари пĕр пўрнерен юн сăрхăнать. Юрать кăçатă пысăкрах пулнă, унсăрăн ура лапписĕр юлаттăм ахăртнех. Тата юрать мăшăрăм вăхăтра пальто çухавинчен ярса илнĕ, унсăрăн... Поезд айне пулаттăм...

Çакăн хыççăн пушшех вăйран кайрăм. Çул çинчех вилетĕп пулас. Пĕр чарăнура тухтăрсем кĕчĕç. Кашнин сывлăхне тĕрĕслерĕç вĕсем. Йывăр туякансене наçилккапа илсе тухма ыйтрĕç. Черет ман пата çитрĕ.

– Ку хĕрарăм тифпа чирлет. Больницăна вырттармалла, – терĕ.

– Пулма пултараймасть. Ача чухне тифпа чирленĕ эпĕ, – хирĕçлерĕм самантрах.

Мăшăрăм хăраса ўкрĕ.

– Сана больницăна вырттарсан, ачасене ăçта хумалла? – терĕ пăшăрханса.

Санитарсемпе тухтăрсем кайсан эпир пĕр чарăнура анса юлтăмăр. Ярославль облаçĕнчи пĕр яла пырса кĕтĕмĕр. Никам та хваттере яманран чылайччен нушалантăмăр. Ара, мана чирлĕскере курсан, аякран пăрăнаççĕ. Кайран пĕр хĕрарăм шеллесе пире хăй патне йыхравларĕ. Тепĕр кунне мăшăр чаçне тухса кайиччен пĕр михĕ çĕрулмипе кĕрпесем килсе пачĕ. Çупа сĕт те тупма пултарчĕ. Сывпуллашнă чухне çамкаран чуптурĕ.

– Хама вилнĕ çын пек туйрăм... Ара, вилнисене çеç çамкаран чуптăваççĕ, – терĕм вăйсăррăн.

Ыталаса тутаран чуптурĕ те тухса кайрĕ. Ах, пĕр чĕптĕм вăй çук. Ял тухтăрĕ килчĕ пĕр кунхине. Вăл та манра тиф чирĕ пуррине палăртрĕ. Кил хуçи хăраса ўкрĕ.

– Апла пире те ерĕ ку чир, асăрханмалла, – тесе мана сивĕ чăлана илсе тухса вырттарчĕ.

Икĕ кун çавăнта пултăм. Каллех тухтăр килчĕ. Ку хутĕнче вăл:

– Санăн нимĕнле тиф чирĕ те çук, – терĕ.

Кашни кун сиплеме çўрерĕ вăл. Маншăн пĕр уйăх çапла тăрăшрĕ. Вăй кĕнине туйрăм, утса çўреме тытăнтăм. Сывалсан, алă усса ларас темерĕм. Колхозра вăй хума тытăнтăм. Малтанах, хула çыннине, унта тăрăшма мĕн тери йывăрччĕ. Ара, ял пурнăçне мĕн пĕлетĕп-ха ĕнтĕ? Ачасене выçă лартас мар тесе темле йывăр ĕçе те пурнăçлама тытăнтăм. Пурнăç темĕнле йывăрлăха та парăнма вĕрентет иккен. Тĕпренчĕкĕмсен япалисене сĕтпе улăштарма тытăнтăм. Мĕнле те пулин выçă вилес мар тесе тăрăшрăм-çке».

АКЦИ

# Кĕнекепе туслашар-и?



Чăваш Республикин Культура министерствин пуçарăвĕпе Чăваш наци библиотеки «Чăваш Ен литература палитри: вулама сĕннĕ 100 кĕнеке» акци йĕркелет. Вăл 2015 çулхи мартăн 25-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 1-мĕшĕччен тăсăлать. Мероприятие Раççейри Литература тата Чăваш Енри Константин Иванов çулталăкĕсене халалланă. Республика акцийĕн тĕллевĕ – наци литературин паха тĕслĕхĕсене палăртасси, вĕсене вулакансем патне çитересси, вулав хастарлăхне ӳстересси.

Апрелĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа майăн 27-мĕшĕччен кĕнекесен списокне сӳтсе явма май пулнă. Ăна Чăваш наци вулавăшĕн сайтне вырнаçтарнăччĕ. Акцие халăх хушшинче сарас енĕпе йĕркеленĕ мероприятисене ытти библиотекăсем, вĕренӳ заведенийĕсем, массăллă информаци хатĕрĕсем, тĕрлĕ организаципе пултарулăх пĕрлешĕвĕ хутшăннă. Çак хушăра кашни вулакан хăйне килĕшекен произведенисемшĕн суйлама, хăй кăмăлне палăртма пултарнă.

Иккĕмĕш тапхăрта ятарлă ушкăн суйлава пĕтĕмлетнĕ. Асăннă ушкăна культура, ăслăлăх, вĕренӳ ĕçченĕсем, общество организацийĕсемпе массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсем кĕнĕ. Шăпах вĕсем çирĕплетнĕ те 100 кĕнекерен тăракан списока.

Акцин юлашки тапхăрĕнче «Чăваш Ен литература палитри: вулама сĕннĕ 100 кĕнеке» электрон пухмăшне хатĕрлеме палăртнă. Ку ĕç кĕркуннеччен вĕçленĕ. Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен вара произведенисене Наци вулавăшĕн сайтĕнче **www.nbchr.ru** тупса вулама май пулĕ. Унччен вăхăт пур-ха. Умра – хаваслă каникул. Ăна савăнăçлă кăна мар, усăллă та иртересчĕ. Эппин, кĕнекепе туслашар-и?

Хаклă тантăшăмăрсем, вулама сĕннĕ кĕнекесен списокĕпе паллаштаратпăр сире. Ахăртнех, шкулта чылай хайлава шĕкĕлчеме те ĕлкĕрнĕ эсир. Халĕ вара çĕннисене ăша хывма шăпах меллĕ самант. Вăл е ку автор произведенине вуласа тухнă хыççăн çуралнă шухăшсене пире çырса пĕлтерме пултаратăр. Сирĕн çырăвăрсене илме эпир яланах хавас.

***Ольга АВСТРИЙСКАЯ.***

## Вулама сĕннĕ хайлавсем

1. Леонид Агаков «Ылтăн вăчăра», «Юманлăхра çапла пулнă»
2. Хветĕр Агивер «Сар ачапа сарă хĕр»
3. Николай Айзман «Кай, кай Ивана»
4. Юрий Айташ «Атнер»
5. Геннадий Айхи «Чĕрĕ тĕвĕ», «Пуçламăшĕ»
6. Александр Алка «И.Я. Яковлев», «Палăк», «Шупашкар çăкисем»
7. Василий Алентей «Курăксене тайса çил вĕрет»
8. Александр Артемьев «Салампи»
9. Степан Аслан «Ахрат»
10. Алексей Аттил «Сан умăнта…», «Çил»
11. Алексей Афанасьев «Юманлăх çулçă тăкмарĕ»
12. Порфирий Афанасьев «Тав»
13. Валем Ахун «Урхамахăм чĕнет инçете»
14. Александр Волков «Пĕчĕк ялăн пысăк çылăхĕ»
15. Геннадий Волков «Кил илемĕ», «Юманпа хĕвел»
16. Мария Волкова «Эп – юрату, ачашлăх, иментĕ…», «Ан сивĕн, савни», «Эп пурнатăп йăлăмра», «Вега»
17. Алексей Воробьев «Кăнтăрла»
18. Александр Галкин «Сиплĕ сăмах»
19. Денис Гордеев «Çич çунатлă курак»
20. Василий Давыдов-Анатри «Ӳссен эсĕ кам пулан?»
21. Анатолий Емельянов «Хура кăрăç»
22. Георгий Ефимов «Чĕрере ан сӳнтĕр юрату. Гори, гори, звезда любви»
23. Константин Иванов «Нарспи», «Шуйттан чури», «Тимĕр тылă»
24. Иван Ивник «Сывлăм йĕрĕ юлчĕ çырура»
25. Василий Игнатьев «Пĕчĕк акăшсен ташши»
26. Илпек Микулайĕ «Хура çăкăр»
27. Николай Исмуков «Ахăрсамана»
28. Николай Ишентей «Хӳреллĕ дневник», «Планетăпа чĕре»
29. Александр Кăлкан «Кăвак тӳпе»
30. Анатолий Кибеч «Чăваш пулма çăмăл мар»
31. Мĕтри Кипек «Кайăк тусĕ», «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ»
32. Гурий Комиссаров /Вантер/ «Чăвашсем çинчен»
33. Георгий Краснов «Катăк чĕлĕм»
34. Ева Лисина «Çăкăр чĕлли»
35. Иоаким Максимов-Кошкинский «Константин Иванов»
36. Николай Мартынов «Пĕр ухмахăн юратнă сăмахĕ»
37. Любовь Мартьянова «Йышăнман сăмахсем»
38. Леонид Маяксем «Лива»
39. Алексей Медведев «Тулли пучах»
40. Митта Ваçлейĕ «Çак юрра эп ахаль мар юрларăм»
41. Спиридон Михайлов /Янтуш/ «Чăваш халапĕсем»
42. Никифор Мранькка «Ĕмĕр сакки сарлака»
43. Ефим Никитин «Сарпике»
44. Георгий Орлов «Вутри юрату», «Пирĕн пурнăç хăтлăхра» /Айдар/
45. Петр Осипов «Айтар», «Элкей тавраш»
46. Федор Павлов «Ялта», «Сутра»
47. Влас Паймен «Кĕпер»
48. Ираида Петрова /Нарс/ «Татюк»
49. Нелли Петровская «Шурă лили»
50. Вениамин Пехил «Шăнкрав курăкĕ»
51. Николай Полоруссов-Шелепи «Уксак Тимĕр Пӳлере илни çинчен»
52. Василий Ржанов «Тĕнче çаврăнать» /Энтип/
53. Виктор Рзай «Усă хапха»
54. Владимир Садай «Летчиксем»
55. Иван Салампек «Пирвайхи юрату»
56. Раиса Сарпи «Тăрнаккай»
57. Юрий Сементер «Кĕрхи вĕçев», «Шĕнкрен» /Пуля/
58. Михаил Сениэль «Çĕр чунĕ»
59. Юрий Скворцов «Уках хурăнĕ», «Сурăм хĕрĕ»
60. Анатолий Смолин «Кĕтрет кĕтесĕ»
61. Михаил Сунтал «Асамлă алгоритм»
62. Петĕр Çăлкуç «Карамель-тарамель»
63. Çеçпĕл Мишши «Катаран каç килсен», «Инçе çинçе уйра уяр», «Тинĕсе», «Çĕн кун аки», «Чăваш! Чăваш!», «Или! Или! Лима самахвани»
64. Алексей Талвир «Пăва çулĕ çинче»
65. Лаврентий Таллеров «Пысăк тĕнчери пĕчĕк чун»
66. Георгий Тал-Мăрса «Хĕрлĕ çар çыннин юрри»
67. Тани Юн «Иртнĕ кунсем-çулсем»
68. Николай Теветкел «Сонетсем»
69. Николай Терентьев «Пушар лаши»
70. Вениамин Тимаков «Чунри сукмаксем», «Упасарри»
71. Григорий Тимофеев «Тăхăр ял»
72. Марфа Трубина «Ача чухнехи»
73. Илле Тукташ «Тăван çĕршыв»
74. Куçма Турхан «Сĕве Атăла юхса кĕрет»
75. Турхан Хĕветĕрĕ «Утă çулни», «Çамрăк сăнĕпелен çамрăк ӳсет…»
76. Турхан Яккăвĕ «Варуççи»
77. Илле Тăхти «Шерхулла»
78. «Улăп» /чăваш эпосĕ/ /Çуйăн Хĕветĕрĕ пухса сăвăланă/
79. Валентин Урташ «Ăраскал»
80. Мария Ухсай «Кăра çилсем»
81. Яков Ухсай «Кĕлпук мучи»
82. Хветĕр Уяр «Шурча таврашĕнче» /икĕ кĕнекеллĕ роман: «Таната», «Таркăн», «Ăста эс, тинĕс?»
83. Михаил Федоров «Арçури»
84. Хумма Çеменĕ «Штрум»
85. Петĕр Хусанкай «Тилли юррисем», «Таня», «Аптраман тавраш»
86. Борис Чиндыков «Çатан карта çинчи хура хăмла çырли»
87. Куçма Чулкаç «Лапшу Çтаппанĕ»
88. Николай Шупуççынни «Хитре Чĕкеç»
89. Анатолий Ыхра «Автан тус»
90. Василий Эктел «Лили»
91. Çемен Элкер «Хурапа шурă»
92. Ефрем Эллиев «Хапха»
93. Валентина Элпи «Пулас кинсем»
94. Мĕтри Юман «Пӳлĕх йăмри»
95. Геннадий Юмарт «Асаттесем»
96. Энтип Васси «Çĕнĕлӳ» /поэмăсен триптихĕ: «Çунатсăр çилармань», «Никĕс», «Алăри асамат»/
97. Иван Юркин «Мул»
98. Юхма Мишши «Пӳрнескепе унăн тусĕсем»
99. Петĕр Яккусен «Кĕмĕл кимĕ»
100. Нестер Янкас «Катя»

ЫТАРЛĂН

## Варнава (САНИН) монах

### Ӳкĕнӳ

Этем питĕ тарăн шăтăка кĕрсе ӳкнĕ.

Аманнăскер выртнă, вилĕмĕ те çывăхрах...

Юлташĕсем чупса çитнĕ. Пĕр-пĕринчен тытăннă, ăна пулăшма анма хăтланнă, анчах чутах хăйсем кĕрсе ӳкмен.

Ăш пиллĕх килнĕ. Ханкăра пусма антарнă та – эх, шел!.. – тĕпне çитеймен!

Этем тахçан пурнăçланă ырă ĕçсем вĕçтерсе çитнĕ, аяла вăрăм вĕрен ыватнă. Анчах вăл та кĕске-мĕн...

Пысăк чап та, укçа-тенкĕ те, власть те çынна пулăшма кăлăхах тăрăшнă...

Тинех ӳкĕнӳ килнĕ. Алне тăснă вăл. Этем ăна ярса тытнă та... шăтăкран тухнă!

– Епле пултартăн-ха капла? – тĕлĕннĕ пурте.

Анчах ӳкĕнĕвĕн хуравлама вăхăт пулман.

Вăл ытти çынсем патне васканă, вĕсене хăй çеç çăлма пултарнă-çке-ха...

### Хĕрлемес мулкач

Мулкач хĕлле хăй тăрăх пăхса илнĕ, çулла хăйĕн çине куç ыватнă та çапларах шухăш патне пырса тухнă: ара, мĕншĕн икĕ кĕрĕк кăна манăн: шурри те сăрри? Хĕрлемес тĕслине çĕлем-ха – тилĕнни пеккине! Пĕрремĕшĕнчен, илемлĕ. Иккĕмĕшĕнчен, ытти мулкачсем манран хăрама пуçлĕç, пахчари мĕнпур кишĕр вара манăн пулĕ!

Каланă – тунă. Çĕнĕ кĕрĕк çĕлесе тăхăннă та уçăлма тухнă мулкач. Тилĕ ăна аякранах асăрханă та савăннă. Урăх вăрманти палланă тилĕ тус хăнана килнĕ тесе шутланă-çке вăл. Унран чикĕ леш енчи çĕнĕ хыпарсене ыйтса пĕлме, хăвăннисене каласа пама пулать вĕт!

Хайхискер тилĕ мар, мулкач пулнине ăнкарса илсен тата хытăрах хĕпĕртенĕ, мĕншĕн тесен иртенпе апатланман.

Мулкачăн савăнăçĕнчен йĕрĕ-палли те юлман.

Аран тарса хăтăлнă кĕске хӳре. Ара, çиессинчен ытларах пурăнас килет-çке-ха!

Тилĕ тутине çеç çуласа юлнă. Мулкач вара Турă Хăй пилленинчен мĕн те пулин улăштарасси пирки шухăшлама та хăйман çавăнтанпа.

***Вырăсларан Ольга ИВАНОВА куçарнă.***

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

## «Çĕр çырли» торт

**Торт валли 1 стакан çурă çăнăх, 100 грамм услам çу, 1 стакан сахăр, 2 стакан çурă хăйма, 1 чей кашăкĕ апат соди, 3-4 çăмарта, 800-900 грамм çĕр çырли, 1 стакан сахăр çăнăхĕ кирлĕ**.

Çăмарта саррисене шурринчен уйăрса сахăрпа лăкăр, ирĕлтернĕ услам çу, хăйма хушса миксерпа пăтратăр. Хыççăн çăнăхпа апат соди, унтан лăканă çăмарта шуррисене пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн хутăштарăр.

Чустана çу сĕрнĕ формăна хурса 180-190 градус таран хĕртнĕ духовкăра 40 минут пĕçерĕр.

Çĕр çырлине 2-3 кашăк сахăр сапăр та 30 минут, сĕткенĕ сăрхăниччен, тытăр.

Хатĕр коржа духовкăран кăларăр та типтерлĕн касса икке пайлăр. Кашнине çырла сĕткенĕпе йĕпетĕр. Аялти корж çине çырла хурăр, шултăрисене касăр. Çиеле лăканă хăймапа сахăр çăнăхĕн хутăшне сĕрĕр. Хыççăн иккĕмĕш коржпа витĕр те юлнă хутăша сĕрсе çырлапа илемлетĕр. 1-2 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартăр.

## Çĕрулмипе хатĕрленĕ хăпарту

**Апата хатĕрлеме 5-6 çĕрулми, 500 грамм аш арманĕпе авăртнă какай, 1 пуç сухан, 3 çăмарта, кăштах хытă сыр, ешĕл çимĕçсем кирлĕ.**

Пĕçернĕ çĕрулмие услам çу, кăштах сĕт, 1 чĕрĕ çăмарта хушса нимĕрлемелле.

Çу янă çатмара вĕтĕ туранă сухана уйăрăмăн, хыççăн какай хушса ăшаламалла.

Формăна çĕрулми нимĕрĕн çур пайне хурса тикĕслемелле. Иккĕмĕш сие какай, юлашкинчен юлнă нимĕре хумалла. Кăштах хăйма хушса лăканă икĕ çăмартана ямалла та çиеле теркăпа хырнă сырпа вĕтетнĕ ешĕл çимĕç сапмалла. 200 градус таран хĕртнĕ духовкăра 20 минут тытмалла. Апачĕ тутлă пултăр!

## Улма-çырла пăрĕ

**Çак пылак çимĕçе хатĕрлеме 1 стакан шыв, 1 стакан пĕтнĕк /мята/ çулçи, 1 стакан лимон е лайм сĕткенĕ, 5-6 хуппинчен тасатнă киви кирлĕ пулать.**



Вĕреме кĕнĕ шыва пĕтнĕк çулçине ярса 10-15 минут вĕретĕр. Хушăран пăтратса илĕр. Хыççăн шыва курăкран сăрăхтарăр та 4 кивипе лайм сĕткенне хушса блендерпа вĕтетĕр. Сивĕннĕ хутăша пĕчĕк формăсене ярса 1 сехетлĕхе е ытларах та сивĕтмĕше лартăр.

Юлнă кивие çӳхе çаврашкасене касăр, варрине касса кăштах шăтарăр. Çаврашкасене кăштах хытнă мороженăй çине хурăр та варринчен эскимо патакне тирĕр. Çимĕçе морозильнике хурса шăниччен тытăр.

Ку çуллахи уçăлтаракан пылак çимĕçе тĕрлĕ улма-çырларан хатĕрлеме май пур. Уйрăмах арпусран, дыньăран, çĕр тата хăмла çырлисенчен янтăланисем тутлă пулĕç.

● ИЛЕМ КĔТЕСĔ

# Хĕвел хĕртет, пляжа чĕнет



Шăрăхра эпир чылай вăхăта юханшыв, кӳлĕ е пĕве хĕрринче ирттеретпĕр. Шыва кĕрсе, хĕвелпе хĕртĕнсе кĕлеткене писĕхтеретпĕр. Кашни хĕвелпе киленет, хĕртĕнсе ӳте илемлĕ тĕс кĕртесшĕн ĕмĕтленет. Хитре хăмăрланса писнĕ ӳт-пӳ яланах модăра. Илĕртӳллĕрех те курăнать вăл. Уйрăмах хĕр-упраçсем çакна тимлĕх уйăраççĕ.

Çуллахи кунсенче çапах та пурте хĕвелпе хĕртĕнме кăмăллаççĕ. Ӳт хăмăрланса илемлентĕр тесен чăтăмлăх кирлĕ. Анчах хĕвел çинче ытлашши пулни сиенлĕ, çакна яланах асра тытăр.

Уйрăмах çутă та сисĕмлĕ-туйăмлă ӳтлисен хĕвелпе асăрханса хĕртĕнмелле. Пляжа ирхине 11 сехетчен е каçхине 16 сехет хыççăн çеç кайсан аван. Пĕрремĕш хутĕнче 15 минут çеç хĕртĕнĕр, кунсерен çак вăхăта майĕпен ӳстерсе пырăр.

Пляжра вăйăсем выльăр, сăмахран, волейбол. Ун чух кĕлетке пур енчен те тикĕсрех хăмăрланĕ. Выртнă, тăнă е ларнă чухне кашни 10 минутран ӳт-пĕве тĕрлĕ енчен писĕхтерме тăрăшăр.

Писĕхме каяс умĕн хĕвел пайăркисенчи ультрафиолет витĕмне чакаракан кремпа сĕрĕнĕр. Вăл /SPF/ мĕн чухлĕ çӳллĕрех çавăн чухлĕ лайăхрах. Шурă ӳтлисем валли унăн шайĕ çирĕмрен кая мар пулмалла. Çак йышши крем тытăмне лайăх тишкерсе тухăр – вăл вазелинсăр тата глицеринсăр пултăр.

Хĕвел пуçа ан анраттăр тесен панама, шĕлепке тăхăнăр е алшăлли хурăр. Выртса хĕртĕннĕ чухне пуçа çӳлерех вырнаçтарăр, ун айне чĕркенĕ алшăлли тавраш хурăр.

Шывра е çыран хĕрринче сахалтарах пулма тăрăшăр, шыв хĕвел пайăркисен сиенлĕхне ӳстерет. Шыва кĕрсе тухнă хыççăн тӳрех крем сĕрĕр, вăл ӳте нӳрĕклетме, ультрафиолет пайăркасенчен сыхлама пулăшĕ.

Хĕвелпе хĕртĕнсе ӳте илемлĕ тĕс çаптăр тесен тĕрĕс апатланни те пĕлтерĕшлĕ. Ӳт А провитамина /каротин/ пула писĕхет-çке. Вăл вара хĕрлĕ тата хĕрлĕ-сарă тĕслĕ улма-çырлапа пахчаçимĕçре нумай. Уйрăмах унпа кишĕр, цитрус йышне кĕрекен улма-çырла, арпус, помидор, абрикос, хĕрлĕ пылак пăрăç тата ытти те пуян. Çавăн пекех кавăн вăрри, пĕвер, тинĕс пулли, авокадо, шалçа пăрçи усăллă.

Хĕвелпе хĕртĕнсе ытлашшипех писсе кайнине туйăр-тăк тӳрех сулхăн вырăна пытанăр. Нумайрах шыв ĕçĕр. Киле килсен писнĕ вырăна хăйма е алоэ сĕткенне сĕрĕр. Чĕрĕ çĕрулмине теркăпа хырса хĕрелнĕ вырăна хурса 30 минут тытсан та хĕрелнĕ ӳт ыратма чарăнĕ.

# Яштака пӳллĕ пулас килет-и?

Мĕнле пике хăва пек яштака пӳсиллĕ пулма ĕмĕтленмест-ши? Ĕмĕте пурнăçа кĕртес тесе вăрттăнлăхсем шутласа кăларатпăр хăш-чухне – апат сахалтарах çиме тăрăшатпăр, ытлашши ӳтрен хăтăлмашкăн косметика процедурисем тăватпăр. Яланах журнал хуплашкинчи пикесем пек илемлĕ те яштака пулас тесен вара темиçе вăрттăнлăха çеç пăхăнмалла.

1. Хырăм тĕлĕнчи çусене ирĕлтерме çав тĕлти мышцăсене хытарса çемçетни пулăшать. Пресс мышцисене хытарас тĕлĕшпе тунă хускануран /выртса сӳлелле çĕкленни/ вара усси çук. Ун чухне çусем çаплипех юлаççĕ, хырăм вара тата пысăкланма та пултарать.

2. Пĕçĕсем туллирех-тĕк урасене черетпе сылтăмалла-сулахаялла сулни усăллă. Ура хырăмне çӳхетме вара тăсăлса туртăнни /растяжка/ пулăшать.

3. Мышцăсем илемлĕн хытса çирĕпленччĕр тесен хусканусене эрнере 2-3 хут тăвăр.

4. Ирхине тăрсан тӳрех 2 стакан шыв ĕçмелле. Лимон сĕткенне хушма та юрать.

5. Ун хыççăн 10-15 минутран лайăх апатланмалла. Вăл организма вăратма, вăй кĕртме тивĕç.

6. Апатланнă хыççăн 40 минут иртсен çеç чей, компот, шыв тата ыттине те ĕçме юрать.

7. Пĕчĕк порцисемпе, анчах тăтăшах апатланма тăрăшăр. Кунне 5 хутчен, пĕр вăхăтра апатланни аван.

8. Çывăрма выртас умĕн 3-4 сехет маларах апатланмалла.

9. Çимĕçе лайăх, васкамасăр чăмламалла.

10. Апат çинĕ хыççăн 20 минутран çеç тăраннине туйса илме пулать, çакна асра тытăр.

11. Апатланнă чухне çурăма тӳрĕ тытмалла, кĕнеке, хаçат-журнал вуламалла мар, телевизор та пăхмалла мар. Лăпкă лару-тăрура сĕтел хушшине лармалла.

12. Апат çиес килет, анчах юрамасть-и? Ун вырăнне 20 хут куккленмелли хăнăхтару тăвăр, 50 хут пĕр вырăнта сикĕр.

13. Газлă шыв, фастфуд, майонез, кăлпасси менюран пачах кăларса пăрахма тивет. Унсăрăн ĕмĕте пурнăçлама кăткăсрах пулĕ.

14. Салат хатĕрленĕ чухне майонезпа мар, 1-2 кашăк хĕвелçаврăнăш çăвĕпе пăтратмалла. Кун пек усăллăрах.

◈ ХАМĂР АЛĂПА

Пурнăçра катăк пуртă та кирлĕ пулать тесе ахальтен каламан ватăсем. Супăнь юлашкисене те çӳп-çап витрине ывăтма ан васкăр! Вĕсенчен ырă шăршăллă шĕвĕ супăнь хатĕрлеме май пур.

Темиçе супăнь катăкне теркăпа хырса вĕтетĕр. Дозаторлă пушă, таса савăта кăштах лимон сĕткенĕпе глицерин /пĕр пăкă/, вĕтетнĕ супăнь, вĕри шыв ярăр. Хатĕрпе 2-3 кунран усă курма юрать. Çăвăнас умĕн савăта силлесе илĕр.

◈ СĔНӲСЕМ

Перманент маркерпа варалантăр е килти хăш-пĕр япаласене ăнсăртран варалăрăр-и? Ăна çак хатĕрсемпе тасатма пулать: ӳте – хĕвелпе ытлашши хĕртĕнесрен сыхлакан кремпа, репеллентпа /хурт-кăпшанкăпа кĕрешмелли шĕвек/; тумтире – антисептикпа; стенана – шăл тасатмалли пастăпа е çӳç лакĕпе; йывăç сĕтел-пукана – спиртпа; кавире – уксуспа; çемçе сĕтел-пукана – сĕтпе; шурă хăмана, ывăса – ластикпа; керамикăна /кантăка/ – пĕр пек виçепе хутăштарнă апат соди, шăл тасатмалли паста ярса тунă хутăшпа.

# Хаваслă 2015 самант

## Виçĕ сăмах вăчăри

1

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 |
| 8 | 9 | 10 | 11 | 12 | 13 | 14 |
| 15 | 16 | 17 | 18 | 19 | 20 | 21 |
| 22 | 23 | 24 | 25 | 26 | 27 | 28 |
| 29 | 30 | 31 | 32 | 33 | 34 | 35 |
| 36 | 37 | 38 | 39 | 40 | 41 | 42 |

2

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 |
| 8 | 9 | 10 | 11 | 12 | 13 | 14 |
| 15 | 16 | 17 | 18 | 19 | 20 | 21 |
| 22 | 23 | 24 | 25 | 26 | 27 | 28 |
| 29 | 30 | 31 | 32 | 33 | 34 | 35 |
| 36 | 37 | 38 | 39 | 40 | 41 | 42 |

3

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 |
| 8 | 9 | 10 | 11 | 12 | 13 | 14 |
| 15 | 16 | 17 | 18 | 19 | 20 | 21 |
| 22 | 23 | 24 | 25 | 26 | 27 | 28 |
| 29 | 30 | 31 | 32 | 33 | 34 | 35 |
| 36 | 37 | 38 | 39 | 40 | 41 | 42 |

**Асăрхаттарни:** сăмахсене кăтартнă цифрăсем хушшине çырмалла.

**1. Чăваш чĕлхин ăсчахĕсем**

1–7. Чĕлхеçĕ, Н.И. Ашмарина «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» пухса кăларма пулăшнă ăсчах.

7–10. Чăваш халăх педагогикине пуçарса янă академик.

10–20. Чăваш синонимĕсен словарьне хатĕрлесе кăлараканĕ.

21–23. Чăваш чĕлхи тĕпчевçи. Чăваш патшалăх педагогика университечĕн ĕçченĕ.

23–33. Чăвашсен 17 томлă словарьне хатĕрлекенĕ.

33–36. Тĕрлĕ халăхсен ĕç-хĕлне тĕпченĕ этнограф, чăвашран тухнă пĕрремĕш профессор, «Хыпар» хаçат никĕслевçи.

**2. Чăваш сăвăçисем.**

1–6. Чăваш халăх поэчĕ ята илнĕ пĕрремĕш çыравçă.

6–13. Чăваш поэчĕ тата журналисчĕ.

13–8. «Нарспи» поэма авторĕ.

8–21. Чăваш сăвăçи тата писателĕ, ăна Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче тăшмансем концлагерьте асаплантарса вĕлернĕ.

21–22. Чăваш сăвăçи, чылай юрă сăмахĕсен авторĕ.

22–42. Чăваш халăх поэчĕ.

42–36. Чăваш хĕрарăм сăвăçи, «Хурлăханăм, ан хурла» тата ытти кĕнекесен авторĕ.

**3. Чăваш спортсменĕсем**

1–14. Чăваш çăмăл атлечĕ, Олимп вăййисен призерĕ /1956 ç./.

14–15. Чăваш йĕлтĕрçи, Олимп вăййисен чемпионĕ /1972 ç./.

15–20. Чăваш боксерĕ, чылай шайри ăмăртусен çĕнтерӳçи.

20–23. Шупашкарта çуралнă паллă гимнаст, тĕнче класлă Раççей маçтăрĕ.

23–35. Паллă чăваш марафонки /хĕр чухнехи хушамачĕ Ильина/, халĕ Голландире пурăнать.

35–36. Вăрнарта çуралнă, конькипе чупас енĕпе темиçе хут СССР, Раççей чемпионĕ.

***Юрий ФРОЛОВ* (Шупашкар) *хатĕрленĕ.***

## *Икĕ ребус*

***Халăхра сарăлнă каларăш вуланĕ.***







***Çакăнта К.Иванов çырнă «Шуйттан чури» трагедири йĕркесем вуланĕç.***

## *Пуçватмăш*




**Унăн кӳлепине япала тата хисеп ячĕсем çырса вырнаçтарнă. Асăрхаттарни: «Ноль» хисеп паллипе «О» уçă сасă пĕр килеççĕ.**

**Япала ячĕсем:**

Ĕне–Иол–Лаç–Рим–Рио–Сад–Сак–Ток–Упа–Адам–Аида–Акар–Акын–Алка–Арес–Дума–Ирга–Лаша–Лена–Ноль–Олег–Осло–Суше–Тĕве–Ялав–Имаго–Каçал–Квача–Комод–Офорт–Стека–Тарçă–Тевел–Торос–Триал–Алапит–Асатте–Астрал–Втулка–Канапе–Леонов–Марабу–Яриков–Амосова–Ориноко–Острава–Тасеева.

**Хисеп ячĕсем:**

2061, 2921, 3150, 4052, 8390, 20506, 47072, 53286, 90507.